<u>Антонимсем</u>

## СОДЕРЖАНИ

### 1. ПРОЕКТ ЙĔРКИ

1. Предмет
2. Класс
3. Шкул
4. Тема (пай)
5. Урок теми
6. Урок тĕсĕ
7. Технологисем
8. Мелсемпе меслетсем
9. Харкамăн (пайăррăн) пĕлӳ илмелли тĕллевсем
   *Права*
   *Тĕллевпе тупсăм*
   *Мораль тата этика норми*
10. Предметăн пĕрлĕхлĕ результачĕсен тĕллевĕсем
   *Йĕркелӳ*
   *Хутшăну*
   *Информаци*
11. Предметăн ятарлă пĕлӳ илмелли тĕллевĕсем
   *Вĕренекенсен пĕлӳ, пултару, хăнăху ĕçĕ-хĕлĕ*
   *Вĕрентӳ хевти-талпăнăвĕ*
12. Пуплеве аталантарас хăнăхусем
13. Литература (чĕлхе) теорийĕ
14. Словарь ĕçĕ: а) ăнлантармалли пай;
   ă) çырма вĕрентмеллли пай.
15. Курăмлăх хатĕрĕсем.
16. Кăтарту хатĕрĕсем.
17. Урок эпиграфĕ

### II. ПРОЕКТ РЕЗУЛЬТАЧĔ

1. Урокăн технологи картти. Урок теми: «Антонимсем» (5 класс)
2. Урокра усă курнă презентаци.

Усă курнă литература

**ХУШСА ПАНИСЕМ**
1 №-лĕ хушса пани. Презентаци.
2 №-лĕ хушса пани. Карточкăсем.
3 №-лĕ хушса пани. Кроссворд.
4 №-лĕ хушса пани. Хăвăрт каламаллисем.
5 №-лĕ хушса пани. Даймонд.
6 №-лĕ хушса пани.Рефлекси карточки.

## 1. ПРОЕКТ ЙĔРКИ

| Предмет | **Чăваш чĕлхи** | | |
|---|---|---|---|
| Класс | **5 класс** | | |
| Шкул | **Чăваш чĕлхиллĕ шкул** | | |
| Тема (пай, блок, модуль) | **Лексика** | | |
| Урок теми | **Антонимсем** | | |
| Урок тĕсĕ | **Çĕнĕ темăна вĕрентмелли урок** | | |
| Технологисем | вăйă, ушкăнпа ĕçлени, харкамлăха аталантарасси, «Критикăллă» шухăшлава аталантарасси, сывлăха упрасси | | |
| Мелсемпе меслетсем | вĕрентекен сăмахĕ, илемлĕ вулав, ыйту- хурав, çыру, тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупасси, карточкăпа ĕçлени, даймонд туни | | |
| Урок тĕллевĕсем | ***Харкамăн (пайăррăн) пĕлӳ илмелли тĕллевсем*** | ***Предметсен пĕрлĕхлĕ результачĕсен тĕллевĕсем*** | ***Предметăн ятарлă пĕлӳ илмелли тĕллевĕсем*** |
| | 1) тăван чĕлхе илемне туйма вĕрентесси;<br>2) харпăр хăйĕн тата юлташĕсен ĕçне хаклама хăнăхасси | 1) тĕрлĕ пулăмсемпе япаласене тишкерме, уйрăмлăхсене палăртма вĕрентесси;<br>2) харпăр хăй ĕçне тĕрĕс йĕркелесе пыма хăнăхасси; | 1) антонимсемпе пуплевре тĕрĕс усă курма хăнăхтарасси, вĕсен илемлĕ литературăри тата пуплеври вырăнĕ пирки калаçасси;<br>2) ачасене антонимсемпе паллаштарасси, предложенисенчи антонимсене тупма хăнăхтарасси, вĕсене |

| | | | |
|---|---|---|---|
| | | 3) уйрăммăн, ушкăнпа ĕçлеме хăнăхса пырасси. | синонимсенчен уйăрма вĕрентесси. |

| | |
|---|---|
| Пуплеве аталантарас хăнăхусем | «Икĕ юлташ», «Икĕ пĕр тăван» темăпа пĕчĕк калав çырма хатĕрленесси |
| Литература (чĕлхе) теорийĕ | антоним |
| Словарь ĕçĕ | антоним, тăлăп, кĕрĕк |
| Курăмлăх хатĕрĕсем | «Антонимсем», «Сăмах пĕлтерĕшĕсен синонимĕсемпе антонимĕсем» таблицăсем |
| Кăтарту хатĕрĕсем | проектор, экран, Сергеев, Л. П. Синонимсемпе антонимсен кĕске словарĕ, 2014 ç. |
| Урок эпиграфĕ | Вĕренни- çутă, вĕренменни -тĕттĕм |

## II. ПРОЕКТ РЕЗУЛЬТАЧĔ

### Урокăн технологи картти

| Урок тапхăрĕсем | Вĕрентекен ĕçĕ | Ачасен ĕçĕ | Тĕллевĕ | Кăтарту тата курăмлăх хатĕрĕсем | Вăхăчĕ |
|---|---|---|---|---|---|
| Урока йĕркелени | 1. Сывлăх сунатăп, ачасем! Айтăр-ха ырă сунса кĕтсе илер хăнасене. Вĕсем кунта аякри çĕршывранах килнĕ. Асамçăсем. Пăхăр-ха: вĕсем пĕр пекрех, анчах та уйрăмлăхсем те пур. Çав уйрăмлăхсене тупар-ха. Пĕрин калпакĕ шурă тĕслĕ, теприн вара – хура. Пĕри - çÿллĕ, теприлутра. Пĕрремĕшĕ хаваслă, иккĕмĕшĕ-тунсăхлă. Пĕрин сылтăм аллинче карточăсем, теприн вара–сулахай аллинче.<br><br>- Халь вара эсир мана калăр-ха, мĕнле сăмахсем пирĕн паянхи хăнасене пĕр-пĕринчен уйăрма пулăшрĕç? (Хире-хирĕç пĕлтерĕшлĕ сăмахсем).<br>- Çапла, ку сăмахсене антонимсем теççĕ. Эсир мĕнле шутлатăр, хăнасене епле чĕнеççĕ? (Антонимсем). Вĕсем пире урокра пулăшаççĕ те | Ачасем çывлăх сунаççĕ, ыйтусене хуравлаççĕ. Тетрадьсем çине темăна çырса хураççĕ. | Урока лайăх ирттерсе яма хатĕрлесси | «Икĕ Асамçă» ÿкерчĕк. | 1 мин. |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | ĕнтĕ.<br>Паянхи урок темине доска çине çырасси. | | | | |
| Маларах вĕреннине аса илни. | Вĕрентекен урок тĕллевĕпе паллаштарать.<br>Маларах вĕреннĕ темăсене аса илесси. Ыйтусем:<br>1. Лексика мĕн çинчен вĕрентет?<br>2. Лексика пĕлтерĕшĕсене асăнса тухăр.<br>3. Мĕн вăл омоним?<br>4. Мĕн вăл синоним? | Ачасем ыйтусене хуравлаççĕ. Урокăн эпиграфне çырса хураççĕ. Пурте пĕрле вулаççĕ. «Вĕренни – çутă, вĕренменни – тĕттĕм». | Вĕренекенсене итлеме, ыйтусене хуравлама, йăнăшсене тупма хăнăхтарасси | Слайд çинче ыйтусем: | 2 мин. |
| 1.Кăсăклантарни | Доска çинче сăмахсене вуласси.<br>-Мĕнле сăмахсене çырнă –ши унта?<br>-Тĕрĕс, ачасем. Вĕсем пурте хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсем. | Ачасем доска çинчи сăмахсене тетрадьсем çине çырса хураççĕ. Вĕренекенсем хуравлаççĕ. | | Слайд çинче сăмахсем:<br>Кĕр- тух<br>Пĕчĕк- пысăк<br>Çамрăк- ватă<br>Тус –тăшман | 20 мин. |
| | 156-мĕш страницăри ўкерчĕке пăхса хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупăпăр.<br>- Антонимсем çинчен мĕн пĕлесшĕн эсир? (Антонимсене калаçура мĕнле усă курасси, вĕсене мĕнле тупасси, антонимсен словарĕ пур-и?) | Ачасем хире-хирĕçле пĕлтерĕшлĕ сăмахсене тупаççĕ. | Словарьпе усă курма хăнăхасси | | |
| | Карточкăсемпе ĕçлесси. Вĕсене парса илекенĕсем Асамçăсем.<br>- Ачасем, карточкăсем çинче тупмалли юмахсем. Вĕсен тупсăмне тупар-ха.<br>**1-мĕш ушкăн.**<br>Автанран лутра, лашаран çўллĕ. (Пĕкĕ)<br>Тултан сакăр кĕтеслĕ, шалтан тăват кĕтеслĕ. (Пўрт)<br>2-мĕш ушкăн.<br>Тăлăпĕ пўртре, çанни тулта. (Мăрье)<br>Хĕлле хĕлĕпе ĕçлет, çулла хăяккăн выртать. (Çуна)<br>**3-мĕш ушкăн** | Ачасем ушкăнăн - ушкăнăн ĕçлеççĕ, тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупаççĕ. | Тăлăп, йĕнерчĕк сăмахсен пĕлтерĕшĕсене тĕрĕс ăнланма пулăшасси | Тăлăп, йĕнерчĕк ўкерчĕк | |

<table>
<tr><td></td><td>Лашаран ҫӳллӗ, курӑкран лутра<br>( Йӗнерчӗк)<br>Шӑлӗ пур, ҫӑварӗ ҫук (Пӑчкӑ)<br>4-мӗш ушкӑн<br>Ани шурӑ, вӑрлӑхӗ хура. ( Кӗнеке)<br>Шалта йӗпе, тулта хура. (Хуран)<br>-Мӗнле йывӑрлӑхсене тӗл пултӑр? Тен, пире асамҫӑсем пулӑшӗҫ?</td><td></td><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td>- Антонимсене эпир тата ӑҫта тӗл пулатпӑр? Ӑҫта вӗсене усӑ кураҫҫӗ?<br>(Тупмалли юмахсенче, юмахсенче, калавсенче, сӑвӑсенче…). Сирӗн ытларах пӗлес килет-и?<br>-Ачасем, сирӗн партӑсем ҫинче карточкӑсем. Вӗсенче ҫыравҫӑсене тата хайлавӗсене ҫырса панӑ. Сирӗн вара антонимсем пулакан произведенисене суйласа илмелле.<br>1. Ҫеҫпӗл Мишши. «Пурнӑҫпа вилӗм».<br>2. Денис Гордеев. «Анаталла тӑвалла».<br>3. Ҫемен Элкер. «Хурапа шурӑ».<br>4. Александр Алка. «Хӗҫпе ҫурла».<br>5. Александр Угольников. «Шур тӳмеллӗ хура купӑс».<br>6. Хветӗр Уяр. «Виҫӗ кун, виҫӗ каҫ».<br>7. Георгий Краснов. «Ҫитетпӗр хӗрӗхе, иртетпӗр хӗрӗхрен».<br>8. Александр Алка. «Хурама та хурӑн».</td><td>Ачасем ушкӑнпа ӗҫлеҫҫӗ</td><td>Ҫӗнӗ пӗлӳ илнине тӗрӗслени</td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td>Халӗ сирӗнпе тӗпчевирттерӗпӗр. Сӑмахӑн лексика пӗлтерӗшне мӗнле тупмалла?<br>Малтан «Сӑмах пӗлтерӗшӗсен синонимӗсемпе антонимӗсем» таблицӑпа ӗҫлӗпӗр.<br><table><tr><td></td><td>Сӑмах пӗлтерӗшӗсем</td><td>Синонимсем</td></tr><tr><td>1.</td><td>Чӗрӗ ҫын</td><td>Сывӑ ҫын</td></tr><tr><td>2.</td><td>Чӗрӗ хӗр</td><td>Ҫивчӗ,йӑрӑ хӗр</td></tr><tr><td>3.</td><td>Чӗрӗ курӑк</td><td>Нӳрӗ (йӗпе) курӑк</td></tr></table></td><td>Ачасем таблицӑна пӑхса сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене аса илеҫҫӗ</td><td>Пӗтӗмлетӳсем тума вӗрентесси</td><td>«Сӑмах пӗлтерӗшӗсен синонимӗсемпе антонимӗсем» таблица</td><td></td></tr>
</table>

<table>
<tr><td></td><td colspan="3">
<table>
<tr><td>4.</td><td>Чĕрĕ куç</td><td>Çивĕч (витĕр) куç</td><td></td><td>Вăйсăр (хавшак) куç</td></tr>
<tr><td>5.</td><td>Чĕрĕ шыв</td><td>Вĕретмен шыв</td><td></td><td>Вĕретнĕ шыв</td></tr>
<tr><td>6.</td><td>Чĕрĕ сывлăш</td><td>Нӳрĕ сывлăш</td><td></td><td>Типĕ (вĕри) сывлăш</td></tr>
<tr><td>7.</td><td>Чĕрĕ тăвар</td><td>Нӳрĕ тăвар</td><td></td><td>Типĕ тăвар</td></tr>
<tr><td>8.</td><td>Чĕрĕ пулă</td><td>Лайăх пулă</td><td></td><td>Пăсăк (çĕрĕк) пулă</td></tr>
</table>
</td><td></td><td></td></tr>
<tr><td></td><td><br>Панă сăмахсен антонимĕсене тупăр
<table>
<tr><td>С</td><td>И</td><td>В</td><td>Ĕ</td><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td>К</td><td>И</td><td>В</td><td>Ĕ</td><td></td><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td>Й</td><td>Ӳ</td><td>Ç</td><td>Ĕ</td><td></td><td></td><td></td><td></td><td></td></tr>
<tr><td>В</td><td>Ĕ</td><td>Т</td><td>Ĕ</td><td></td><td></td><td></td><td></td><td></td><td></td></tr>
</table>
</td><td>Вĕренекенсем кроссворд тупаççĕ</td><td>Ачасен тавçăрулăхне ӳстересси</td><td>Кроссворд</td><td></td></tr>
<tr><td>Ăнланса илни</td><td>Панă сăмахсен синонимне тата антонимне тупăпăр. Пĕрремĕш юпана синонимсене, иккĕмĕш юпана антонимсене çырса тухăпăр.
<table>
<tr><td>Синонимсем</td><td>Антонимсем</td></tr>
<tr><td>Ăшă сăмах- (кăмăллă)</td><td>Сивĕ сăмах- (хаяр)</td></tr>
<tr><td>Ăшă сĕт- (тин сунă сĕт)</td><td>Ăшă сĕт- (сивĕ)</td></tr>
<tr><td>Ăшă куç- (кăмăллă)</td><td>Ăшă куç-(усал)</td></tr>
</table>
</td><td>Ачасем синонимсемпе антонимсене тупаççĕ</td><td>Вĕренекенсен шухăшлавне аталантарасси</td><td></td><td>17 мин.</td></tr>
<tr><td></td><td>Предложенисене вулăр, паллă тунă антонимсене мĕн тĕллевпе усă курнине калăр.<br><u>Кăмăллă</u> арçын ача хĕр ачана алăк уçса маларах кĕртсе ярать. <u>Кăнттам</u> ача ыттисене тĕртсе ярса хăй малтан кĕрсе каять.<br>Ăслă çын аслисем асăрхаттарсан чĕнмест. Ухмах çын асăрхаттарнине итлесе пĕтермест, çынна йывăр сăмахпа кӳрентерет.</td><td>Ачасен хуравĕ: (Кăмăллă, кăнттам; ăслă, ухмах) антонимсем</td><td>Йĕркеллĕ пулма вĕрентесси</td><td></td><td></td></tr>
</table>

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | **«Антонимсемпе илемлĕ литературăра усă курни» тĕпчев**.<br>Эпир сирĕнпе халĕ К. Ивановăн «Нарспи» поэма сыпăкĕпе паллашăпăр. Антонимсене тупса вĕсен пĕлтерĕшĕсене калăр.<br>Иртсе кайрĕ тĕттĕм çĕр,<br>Хуллен-хуллен сирĕлчĕ,<br>Сикрĕ тухрĕ çутă кун,<br>Çут çанталăк çуталчĕ...<br><br>Ялтăртатать ырă кун,<br>Усал кунăн мĕн ĕç пур?..<br>Ватă чун та хытнă чун<br>Хытса кайнă кĕççе çав.<br><br>Çамрăк чун та пĕчĕк чун,<br>Чунĕ ытла çемçе çав.<br>Нарспикайрĕ ют яла,<br>Сетнер утрĕ хăй килне…<br><br>Хĕвел анчĕ, каç пулчĕ,<br>Чăваш çынни çывăрать.<br>Хĕвел тухрĕ, çуталчĕ,<br>Чăваш ĕçе тытăнать | Ачасем антонимсене тупаççĕ | Пĕлĕве тупма, унпа усă курма хăнăхтарасси | | |
| | Учебникри 386-мĕш хăнăхтарăва тăвасси. | Ачасем хăнăхтарăва çыраççĕ | Ачасен ĕçĕсенче тĕл пулакан йăнăшсене асăрхасси | | |
| | Ачасем, сирĕн валли асамçăсем ĕçсем хатĕрлесе килнĕ. Вĕсем антонимсем çинчен йăлтах пĕлеççĕ.<br><br>- Эпир хăвăрт каламаллисене юрататпăр. Кам вĕсене пĕр такăнмасăр калама пултарать? Унти антонимсене тупăр.<br>Курăка **курать** курак, | Хăвăрт каламаллисене калаççĕ, антонимсене тупаççĕ | Ачасен хăнăхăвĕсене тĕрĕслени | | |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Курăк курака **курмасть.**<br><br>Çемен **çимен** пиçене,<br>Çемен **çинĕ** иçĕме. | | | | |
| | Халĕ вара ***даймонд*** çырăпăр. Вăл çичĕ йĕркерен тăрать:<br>1. Япала ячĕ.<br>2. Пĕрремĕш йĕркери япала ятне ăнлантаракан икĕ паллă ячĕ.<br>3. Пĕрремĕш йĕркери сăмахпа çыхăннă виçĕ ĕç-хĕл.<br>4. Тăватă сăмахран тăракан предложени, вĕсенчен иккĕшĕ 1-мĕш йĕркери япала ятне уçса параççĕ, иккĕшĕ -7-мĕш йĕркерине.<br>5. Çиччĕмĕш йĕркери самахпа çыхăннă виçĕ ĕç-хĕл<br>6. Çиччĕмĕш йĕркери япала ятне ăнлантаракан икĕ паллă ячĕ.<br>7. Пĕрремĕш йĕркери япала ятне хирĕçлекен япала ячĕ.<br><br>1. Çуркунне.<br>2. Ешĕл, хаваслă.<br>3. Ешерет, çухатать, салатать.<br>4. Çуркунне – пултăран, кĕркунне- шăрттан.<br>5.Пуçтарать, тăрантарать, пуйтарать.<br>6. Тунсăхлă, ылтăн.<br>7. Кĕркунне. | Ачасем даймонд çыраççĕ | | | |
| | **Физкультминутка irttерни**<br>Алсене вăр-вар çĕклер-и?<br>Çӳлелле пуç тăррине. | Ачасем хусканусем тăваççĕ | | | |

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| | Шарт та шарт çупса илер-и?<br>Кам савмасть ал çупнине? | | | | |
| 3. Рефлекси (пĕтĕмлетӳ) | Ачасем, паянхи урокра килĕштерсе ĕçленĕшĕн пурне те тавах. Антонимсем çинчен эсир каласа пама пултарасса эпĕ шансах тăратăп.<br>Урока ачасемпе пĕтĕмлетесси.<br>- Паян урокра мĕн вĕренсе çитрĕмĕр эпир?<br>- Илнĕ пĕлӳпе ăçта усă курма пултаратпăр.<br>«Антонимсем» таблицăпа усă курса пĕтĕмлетесси. | Ачасем ыйтусене хуравлаççĕ, рефлекси карточкине тултараççĕ. Хăйсен ĕçне хакланă май тетрачĕн сылтăм енне смайликсем ӳкерсе хураççĕ<br> | | «Антонимсем» таблица, рефлекси карточки | 3 мин. |
| Киле ĕç пани | 1) Антонимсемпе усă курса «Икĕ юлташ» е «Икĕ пĕр тăван» темăпа пĕчĕк калав çырасси.<br>2) 389-мĕш хăнăхтару.<br>Отметкăсем лартасси. | Ачасем киле панă ĕçе çыраççĕ | | | 2 мин. |

**Хушса панисем**

*1№ хушса пани*

Урока валли хатĕрленĕ презентаци



















*2№ хушса пани*

**Карточкăсем**

**1-мěш ушкăн.**
Автанран лутра, лашаран çӳллě. (Пěкě)
Тултан сакăр кĕтеслĕ, шалтан тăват кĕтеслĕ. (Пӳрт)
**2-мěш ушкăн.**
Тăлăпě  пӳртре, çанни тулта. (Мăрье)
Хĕлле хĕлĕпе ĕçлет, çулла хăяккăн выртать. (Çуна)

**3-мĕш ушкăн**
Лашаран çӳллĕ, курăкран лутра
( Йĕнерчĕк)
Шăлĕ пур, çăварĕ çук (Пăчкă)
**4-мĕш ушкăн**
Ани шурă, вăрлăхĕ хура. ( Кĕнеке)
Шалта йĕпе, тулта хура. (Хуран)
-Мĕнле йывăрлăхсене тĕл пултăр? Тен, пире асамçăсем пулăшĕç?

*3№ хушса пани*

**Кроссворд**

| | | | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| С | И | В | Ĕ | | | | | | |
| К | И | В | Ĕ | | | | | | |
| Й | Ӳ | Ç | Ĕ | | | | | | |
| В | Ĕ | Т | Ĕ | | | | | | |

Хуравĕ: Сивĕ- ăшă, кивĕ-çĕнĕ, йӳçĕ-пылак, вĕтĕ-шултра

*4№ хушса пани*

**Хăвăрт каламаллисем**

Курăка **курать** курак,
Курăк курака **курмасть.**

Çемен **çимен** пиçене,
Çемен **çинĕ** иçĕме.

**Даймонд**

Вăл çичĕ йĕркерен тăрать:
Япала ячĕ.
Пĕрремĕш йĕркери япала ятне ăнлантаракан  икĕ паллă ячĕ.
Пĕрремĕш йĕркери сăмахпа çыхăннă виçĕ ĕç-хĕл.
Тăвата сăмахран тăракан предложени, вĕсенчен иккĕшĕ 1-мĕш йĕркери япала ятне уçса параççĕ, иккĕшĕ -7-мĕш йĕркерине.
Çиччĕмĕш йĕркери самахпа çыхăннă виçĕ ĕç-хĕл
Çиччĕмĕш йĕркери япала ятне ăнлантаракан икĕ паллă ячĕ.
Пĕрремĕш йĕркери япала ятне хирĕçлекен япала ячĕ.

1. Çуркунне.
2. Ешĕл, хаваслă.
3. Ешерет, çухатать, салатать.
4. Çуркунне – пултăран, кĕркунне- шăрттан.
5. Пуçтарать, тăрантарать, пуйтарать.
6. Тунсăхлă, ылтăн.
7. Кĕркунне.

*хушса пани*

**Рефлекси таблици**

| № | Урокри ĕçе тĕрлĕ енчен тишкерни | Ĕçе хаклани |
|---|---|---|
| 1. | Урок материалĕ … пулчĕ. | çăмăл / йывăр |
| 2. | Урок материалне эпĕ … . | • пĕтĕмпех ăнлантăм, ыттисене пулăшма хатĕр<br>• пĕтĕмпех ăнлантăм<br>• кăштах ăнлантăм<br>• пачах ăнланмарăм |
| 3. | Урок мана … . | килĕшрĕ / килĕшмерĕ |
| 4. | Урокра эпĕ … ĕçлерĕм. | хастаррăн / сÿрĕккĕн |
| 5. | Урокра эпĕ … . | • ывăнмарăм<br>• кăштах ывăнтăм<br>• питĕ ывăнтăм |
| 6. | Урокри хамăн ĕçпе эпĕ … . | кăмăллă / кăмăлсăр |
| 7. | Урокри ĕçшĕн хама «…» паллă лартатăп. | 5 / 4 / 3 / 2 |

**Усă курнă литература:**

1. Сергеев Л.П. Чăваш чĕлхи: 5-мĕш класс валли/Л.П.Сергеев, Е.А.Андреева, Г.Ф.Брусова.-Шупашкар:Чăваш кĕнеке издательстви, 2014.
2. Трунцева Т.Н. Проектирование технологических карт уроков литературы и русского языка.5-9 классы.-М.: ВАКО, 2015.